Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа тухать

13 (8079) № * Эрне кун, 2013 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 22-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Февралĕн 23-мĕшĕ – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ

## Салтаксем ялан стройра



*Совет çарĕсене Афганистанри юнлă вăрçăран кăларнăранпа 24 çул çитрĕ. Çав ятпа иртнĕ шăмат кун, нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕнче, çак вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă ентешсем Москакассинчи палăк патне пухăнчĕç. Астăвăм кунне паллă туса тата унта пуç хунă юлташĕсене, тăванĕсене асăнса районти афганецсем палăк умне чечексем хучĕç.*

*Пирĕн районтан çавăнти вăрçă вутĕнче 144-ăн пулчĕ, 7-шĕ çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа пуç хучĕ. Тайма пуç вĕсене. Аякри вăрçă историе юлса пырать. Анчах мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварасси пĕрлехи ĕç пулнине ĕнерхи салтаксем самантлăха та манмаççĕ.*

*Палăк умĕнчи тĕл пулу хыççăн пухăннă интернационалист-салтаксем (сăн ӳкерчĕкре вĕсен пĕр ушкăнĕ) Юнкăри вăтам шкулта пулса паттăрлăх урокĕ ирттерчĕç.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ! СИРЕ ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ ХӲТĔЛЕВÇИН КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!**

Тăван çĕр-шыва сыхласси – чыслă та яваплă ĕç. Çĕр-шыва хӳтĕлессине хăйсен профессийĕ туса хунă çынсем обществăра яланах пысăк хисепре шутланаççĕ.

Çак паллă уяв кунĕнче эпир хамăрăн аслă патшалăхăмăрăн истори тапхăрĕсене куç умне кăларатпăр тата унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварнă паттăрсене чунтан тав тăватпăр. Эпир Чуд кӳллипе Куликово хирĕнче, Полтавăпа Бородино патĕнче хастаррăн çапăçнă, Мускавпа Сталинград хулисене хăйсене шеллемесĕр хӳтĕленĕ хăюллă та паттăр çар çыннисене аса илетпĕр.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче тăшманпа куçа-куçăн çапăçнă Чăваш Енре çуралса ӳснĕ çĕршер пин çыннăн тата вĕсен çемйин паттăрлăхĕ ĕмĕрлĕхех сыхланса упранĕ.

Пирĕн республикăри социаллă политика Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсемпе инваличĕсене, вĕсен тăлăха юлнă мăшăрĕсене витĕмлĕ те тулли пулăшу парассине, çав шутра пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессине те, тĕпе хурать. 2012 çулта Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 859 ветеранĕпе инваличĕ пурăнмалли çурт-йĕр туянма социаллă тӳлев илнĕ, асăннă тĕллев валли 839,9 миллион тенкĕ уйăрнă. 2013 çулта пурăнмалли çурт-йĕр кирлĕ çынсен шутĕнче тăракан Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин мĕн пур ветераннех пурăнмалли хăтлă çуртйĕрпе тивĕçтерме палăртнă. Çакăн валли 766,5 миллион тенкĕ уйăрса хăварнă.

Хальхи ăру ветерансен ырă йăли-йĕркине тивĕçлĕн тытса пырать. Пирĕн ентешсем Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă çарĕсенчи хĕсмете чыслăн тата тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă май, граждансен мирлĕ пурнăçне шанчăклăн хураллаççĕ.

Çĕр-шыв хӳтĕлевçисене пурне те улăпла сывлăхпа çирĕп чун хавалĕ, ырă шанăçпа тăнăçлăх, ырлăх тата телей сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ! АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ВĂРÇĂН ЙЫВĂР ÇУЛĔСЕНЕ ЧĂТСА ИРТТЕРНĔ ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, МИРЛĔ ВĂХĂТРАХ ÇАПĂÇУСЕНЕ ХУТШĂННĂ САЛТАКСЕМ, ÇАРА КАЙМА ХАТĔРЛЕНЕКЕН ÇАМРĂКСЕМПЕ ВĔСЕН АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!**

Сире пурне те Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уяв вăл – Тăван çĕр-шыва юратакансен, унăн мирлĕ пурнăçĕпе лăпкăлăхне сыхлакансен, паттăрлăхпа хаюлăх уявĕ. Çĕр-шыва хӳтĕлесси пирĕн çĕр-шыври кашни çыннăн чыслă та хисеплĕ тивĕçĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çĕнтерӳ тунă ветерансемпе тыл ĕçченĕсем умĕнче эпир ĕмĕрĕпех парăмра. Пире вĕсен мирлĕ те телейлĕ пурнăç парнелерĕç, вăрçăпа юхăннă Тăван çĕр-шывăмăра ура çине тăратас ĕçре ырми-канми вăй хучĕç. Паян та вĕсем çитĕнекен ăрăва патриотла воспитани парас ĕçе хутшăнаççĕ, çамрăксем вĕсенчен тĕслĕх илсе ӳсеççĕ. Паянхи çамрăксем аслă ăру çыннисен ĕçне малалла тăснине, Тăван çĕр-шывăмăр паян та шанчăклă алăра пулнине çар конфликчĕсене хутшăннисен паттăрлăхĕ те çирĕплетсе парать. Афган вăрçинче те, ытти вĕри точкăсенче те пирĕн салтаксем çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç. Паттăр ывăлсем çитĕнтернĕ салтак амăшĕсем умĕнче эпир çĕре çити пуç таятпăр.

Çĕр-шыв терекĕ, унăн пуласлăхĕ пирĕнтен кашниннех килет. 2013 çул Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк шутланать. Тăван енре йăлтах йĕркеллĕ пуласси пирĕн чун илемĕнчен, ун тунтăмĕнчен те нумай килет. Пирĕн ытларах ырă ĕç тумалла. Хамăрăн тăрăшуллă ĕçпе район, республика, Раççей çирĕплĕхĕшĕн тимлемелле, пĕрле пĕр тĕллевпе вăй хумалла пирĕн. Вара Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче палăртнисем йăлтах пурнăçланĕç.

Сирĕн пурин те сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Ĕçĕрсем ăнса пычăр. Çемьере килĕшӳпе юрату, тату пурнăç хуçаланчăр.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

**ВĂРÇĂН, ХĔÇ-ПĂШАЛЛĂ ВĂЙСЕН ТАТА ПРАВО СЫХЛАВ ОРГАНĔСЕН ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ĔÇ ВЕТЕРАНĔСЕМ, МУРКАШ РАЙОНĔН ÇЫННИСЕМ!**

Чăваш Республикин Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕ ячĕпе тата хам ятран сире, сирĕн çемйĕрсене, тăванăрсене тата çывăх çыннăрсене уявпа – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Хĕçпе тата чукмарпа тăшман çулне пӳлсе тăнă хӳтĕлевçĕ сăнарĕ авалхи Русьренех пырать.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче хăйсен пурнăçне панă хамăрăн мăн асаттесене, асаттесемпе аттесене аса илсе пуç таятпăр! Пирĕн ентешсене, çар хирĕç тăрăвĕсене хутшăнса пуç хунисене асрах тытмалла.

Туслăх, ырлăх, сывлăх, çемье ăнăçăвĕ – пурсăра та!

Уяв ячĕпе!

**А. КОЧУРОВ,**
**Чăваш Республикин Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕ.**

Раççейре

## Тӳлевсĕр приватизаци тапхăрне тăсаççĕ

Февралĕн 19-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думи хăрăсах виçĕ вулавпа пурăнмалли çурт-йĕре тӳлевсĕр майпа приватизацилемелли тапхăра татах тепĕр икĕ çуллăха – 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен тăсасси пирки саккун йышăннă. Саккун проектне Патшалăх Думине пăхса тухма пур тăватă фракци ертӳçи те сĕннĕ. Асăннă саккун ăна пичетлесе кăларнăранпа вăя кĕрет.

Аса илтеретпĕр, тӳлевсĕр приватизаци тапхăрне тăсасси пирки Раççей Президенчĕ Владимир Путин пуçару тунă. Унăн шухăшне патшалăх ертӳçин пресс-секретарĕ Дмитрий Песков пĕлтернĕ. Хыççăнах Патшалăх Думи президент сĕнĕвне шута илесси пирки хыпарланă пулнă.

Республикăра

## Ыр кăмăллăх марафонĕ пуçланчĕ

Çак эрнере Чăваш Енре «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕ пуçланчĕ. Кăçал ăна республикăри Ача-пăча фончĕ 25 çул тултарнине халалланă.

Марафон 17-мĕш çул иртет. Çак тапхăрта нумай ачаллă, сахал тупăшлă çемьесене пулăшма, ачасене тĕрлĕ фестиваль-конкурссене хутшăнма республика тулашне тухма, ачасем валли кирлĕ медицина оборудованине туянма республикăра пурăнакансем финанс тĕлĕшĕнчен пысăк пулăшу кӳнĕ. Сăмахран, юлашки виçĕ çулта кăна 17,5 миллион тенкĕ пухăннă. Çак укçатенкĕне ача-пăчана пулăшу кӳмелли тĕллевлĕ программăсене пурнăçлама усă курнă.

Кăçал вара марафон пуçланиччен унăн счечĕ çине Вăрнар районĕнче пурăнакан Галина Андреева 5 пин тенкĕ куçарнă та ĕнтĕ. Алли çăмăл пултăр! Пирĕн районта пурăнакансем ырă та пархатарлă ĕçе активлă хутшăнасса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

### РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Сăвăм ӳсрĕ

Кун таврăннă май хуçалăхсенче ĕнесем пăруласси нумайланчĕ. Çак вăхăт – ял çыннишĕн кĕтнĕ самант. Йĕркеллĕ пăрулана ĕнесем сĕт ытларах антарма пуçлаççĕ. Ку эрне пуçланнă тĕле пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчен оперативлă пуçтарнă кăтартусем сĕт сăвасси ӳснине çирĕплетеççĕ. Çулталăк каялла район нарăс уйăхĕн 18-мĕшĕнче кашни ĕне пуçне вăтамран 10,9 килограмм сĕт сунă пулсан, кăçалхи кăтарту 11,2 килогрампа танлашать. Чи пысăк сăвăм унченхиллех Суворов яч. хис. хуçалăхра (17,5 килограмм). Чи пĕчĕк кăтарту «Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕнче: 4,5 килограмм.

## Çырла ӳстересшĕн

Кун вăрăмланса пынă май сисмĕлĕр те, алăкран çур аки шаккĕ. Мичурин ячĕпе хисепленекен агрофирма ертӳçи Б. Михайлов вара паянах çурхи ака-суха пирки калаçать. Ăна кăсăклантараканни – çырла йăранĕсем çинче ĕçлекенсем кирли. Асăннă агрофирма иртнĕ çул Голландирен илсе килсе пысăк шанчăк паракан çĕр çырлин хунавне пĕр гектар çинче лартса хăварнă. 4 сортлă çырлан хунавĕсемпе усă курса фермер кăçалхи çур акире çырла лаптăкĕн калăпăшне 3 гектара, çитес кĕркунне татах ӳстерес ĕмĕтлĕ. Ĕç планĕпе килĕшӳллĕн çырла лаптăкĕ çывăх çулсенче Шетмĕпуçĕнче 13 гектар пулмалла. «Çырла ыйтакансем йышлă пулнăран хамăрăн производство планне çак енпе йĕркелес шут çуралчĕ те», – терĕ ертӳçĕ кĕске калаçура.

## Йĕркене пăснăшăн

Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикипе ĕçлекен федераллă миграци службин управленийĕн Муркашри территори пункчĕ хăйĕн ĕç тĕллевĕсене туллин пурнăçласа пырать. Çак кунсенче кăна территори пункчĕн ертӳçи Л. Плечова регистраци йĕркине пăснă гражданина административлă майпа явап тыттарса таврăнчĕ. Ыттисене пĕлме, ку хутĕнче лару-тăру çапларах çаврăнса тухнă. Пĕр çын кунта пурăнма шутламан азербайджанеца пĕлсе тăрсах хăйĕн килĕнче вăхăтлăх регистрацилет. Саккуна пăсни çиеле тухсан çак ентешĕн административлă майпа явап тытма тиврĕ. Сăмах май, кунашкал йĕркесĕрлĕхшĕн саккун 5 пин тенкĕ таран штраф тӳлеттерме пултарать. Л. Плечова каланă тăрăх кун пек тĕслĕхсем районта иртнĕ çул пиллĕк пулнă.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

# «Темиçе парадра утма телей пулчĕ»

## Ялти ветеран – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçи

...Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул иртет. Çĕр çывăрмасăр йăтса çӳренĕ ачасем хăйсен йăвисене çавăраççĕ. Пурнăç малалла аталанать. Çак çулпа пурнăçран пĕр шит юлмасăр пыракан Вячеслав Шатуновăн çав-çавах Кремль, Хĕрлĕ площадь тата Ленин мавзолейĕ асран каймаççĕ. Ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман хресчен ачи çул çитсен шăпах çавăнта службăра пуласси пирки ачалăхра шухăшлама пултарнă-ши? Çук пулĕ. Анчах...

Раççей историйĕ унăн çар пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Вăл вара Раççей халăхĕн, чăваш çыннин мухтавлă енĕ. Эпир хамăрăн паттăр хӳтĕлевçĕсене яланах юратнă, хисепленĕ, паян та вĕсемпе мăнаçланатпăр. Çар çыннисен ăсталăхĕпе уйрăм паттăрлăхĕ – вырăс салтакĕсемпе офицерĕсен йăлари пахалăхĕ. Пирĕн çар малашне те çĕр-шыв хăрушсăрлăхĕн, Раççей аталанăвĕн çирĕп никĕсĕ пуласса эпир паян та шанатпăр.

Кашни килте асаттесемпе аттесен паттăрлăхне упраççĕ, паян çĕр-шыв хăрушсăрлăхĕн хуралĕнче тăракансемпе мухтанаççĕ. Раççейре пурăнакан кашни çын – çар постĕнче тăрать-и вăл е мирлĕ ĕçе чунне парса пурнăçлать – чăн малтанах Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçи. Пирĕн паянхи парăм вара – вырăс çарĕн тата салтакăн мухтавлă енĕсене пулас ăрусем валли упраса хăварасси. Ку пирĕн çĕнтерӳçĕ салтаксемпе аслă ăрури салтаксем умĕнчи парăм.

Паттăрсен ячĕсем ăруран ăрăва куçмалла. Эпир çакна тума пултаратпăр пулсан, пирĕн ачасен чĕрисенче те паттăрлăх туйăмĕ иксĕлмĕ. Çакă сăмахпа мар, ĕçпе çирĕплентĕр тесе васкарăм эпĕ Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятманта пурăнакан 72 çулхи Вячеслав Шатунов патне.

Ĕççĕр ларма хăнăхман асаттене кил таврашĕнчи алă майлă ĕçсене вĕçлесе пӳрте кĕнĕ вăхăтра тĕл пултăм. Çавăнпах ĕнерхи салтакăн манпа калаçма та вăхăчĕ меллĕрех пулчĕ курăнать.

– Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ, йĕрки пур. Ăна пăхăнмасан майĕ çук, – шӳтлесе илчĕ çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче 72 çул тултарнă Вячеслав Петрович. Çав самантра унăн сăнĕ тăрăх таса та илемлĕ кулă сарăлнăран хам умра саккăрмĕш теçеткене ярса пуснă асатте тăни тăруках иккĕлентерчĕ те. Шӳте ăста иккен салтак! Вăл васкамасăр калаçма пуçласан малтанах ашшĕ-амăшĕн пурнăçĕ, хăйĕн ачалăхĕ куç умне тухрĕç.

Вячеслав Петровичăн ашшĕ – Петр Федорович – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин участникĕ. 1944 çулхи çуркунне йывăр сурансемпе яла таврăнать. Сурансем ыратнине пăхмасть фронтовик: колхозри сысна фермин коллективне ертсе пыма пуçлать. Йывăр сурансем вара хăйĕннех тăваççĕ: паттăр фронтовик Аслă Çĕнтерӳ кунне кĕтсе илеймест.

– Хам пĕчĕккĕ пулнă пулсан та атте пурнăçран уйрăлса кайнине ĕнерхи пекех астăватăп. Хĕвеллĕ те илемлĕ, ăшă кунччĕ. Анне каярах çулсенче каланă тăрăх атте çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă. Тепĕр кунне, çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче, эпир ăна ял халăхĕпе пĕрле юлашки çула ăсатрăмăр. Çав кунах яла Çĕнтерӳ кунĕ пирки те хыпар çитрĕ, – шӳтне чарса тата сассине вăйсăрлатса каларĕ Вячеслав Петрович. – Паян сана питех те лайăх пулĕ, анчах хăвăнпа юнашар тулли куççульлĕ çынсем тăма пултараççĕ. Вĕсем пирки самантлăха та ан ман тесе вĕрентетчĕ ĕмĕрне çĕр ĕçĕнче ирттернĕ анне.

Славăн çын çине шанса ларма вăхăчĕ те, мелĕ те пулман. Ачаллах ĕçе çывăх ӳснĕ: шкулта вĕреннĕ хушăрах пахчара ĕçленĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхнă, колхоза çурлапа тырă вырма çӳренĕ. Ыранхи куна ĕçлемесĕр пăхма çуккине çамрăклах ăнланнă каччă. 1954 çулта Çатракассинчи 7 класлă шкултан вĕренсе тухсан малаллахи пурнăçне колхоз ĕçĕпе çыхăнтарать. Тĕрлĕ вăхăтра колхозра платник пулса та, лашапа хирте те, фермăра çунапа-урапапа тислĕк кăларнă çĕрте те ĕçлет. Кунсăр пуçне ял халăхĕнчен юлмасăр акана хутшăннă, утă çулнă, çум çумланă, улăм пуçтарнă т. ыт. те. Çак ĕçсенче вăл ачалăх çулĕсенчех амăшне пулăшассине мала хунă. Йывăр пулнă, анчах ĕнерхи шкул ачи алă усман, амăшĕн шанчăклă пулăшуçи пулса тăнă.

Ĕçре вăхăт хăвăрт иртет. Ĕçчен каччăн салтака кайма та ят тухать. Анчах Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тăрасси те унăн ытти яшсенни пек пĕр тикĕс пулса иртмест. Малтанах Сĕнтĕр район каччине Мăн Сĕнтĕрти çар комиссариатĕнчен Канаша кайсан призыв пунктĕнче: «Санăн килте 2 ватă çын пур. Пирĕн призыв планĕ тулса. Киле кайма пултаратăн», – теççĕ. Килтен ырă ĕмĕтпе инçе çула тухнă каччăн вара çийĕнчех киле таврăнмалла мар пулса тухать. Ун тĕлне Саратоври механизаци училищинчен килнĕ «шыравçăсем» пулаççĕ. Слава вĕсен йыхравĕпе килĕшсе механизатора вĕренме тухса каять. 11 уйăх иртсен, 1962 çулхи юпа уйăхĕнче, унтанах Совет Çарне действительнăй çар службине тухса каять. Çĕртме сухи тăвакан механизатор, мĕн тетĕр эсир, Кремле службăна лекет. Унччен Мускав хулине курасси пирки ĕмĕтленмен каччă кĕçех Кремль полкĕн формине тăхăнать. Стройпа утма вĕренни, пĕрремĕш поста епле утса пымаллине хăнăхни тата унта пĕрремĕш хут наряда тухса Ленин канлĕхне сыхлани, ют çĕр-шывсенчен килнĕ хăнасем умĕнче хамăр чыса кăтартни, Хĕрлĕ площадьпе парадпа иртни т. ыт. те – паян инçетри çулсенче чăн пулни. Вĕсем йăлтах асрах-ха.

Салтак пурнăçĕ – Тăван çĕр-шыв сыхлавне панă кунсем – хушупа çыхăннă. Çĕршыв умĕнче тупа туни хушăва пĕр сăмахсăр пурнăçлама ыйтать. Вĕрентӳсем иртнĕ хыççăн пĕррехинче çĕр-шыври пĕрремĕш поста наряда кайма хушу тухсан чăваш каччи малтанах пăлханса ӳкет. Тивĕçлипе пурнăçлайрăп-ши çĕр-шыв хушăвне? Фронтовик аттен ятне ямăп-ши? Паян вара Вячеслав Петрович çав хумханăва ăшă кулăпа çеç аса илет.

– Салтак шинелĕ тăхăнса карантинра пулнă хыççăн раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче присяга тытрăмăр та çĕр-шыв хуралĕнчи пĕрремĕш Çĕнĕ çул каçне Ленин мавзолейĕ патне поста лекрĕм. 31 градус сивĕччĕ. Çак çанталăкра пĕр вырăнта тапранмасăр тăрасси... калама кăна çăмăл. Сивĕ çанталăка шута илсе пире çав дежурствăра постра пĕрер сехетрен улăштарса тăчĕç. Ытти чухне вара икшер сехет тăма тиветчĕ. «Килте Çĕнĕ çул тăваççĕ ĕнтĕ. Эпĕ вара Ленин аттене сыхлатăп», – мăнаçланса шухăшларăм çав каç поста кашни тухмассерен. Служба çулĕсенче мавзолейра пĕрре кăна мар пулма тӳр килчĕ. Ленина курнипех-тăр ун пирки çав вăхăтсенче кĕнекесем те чылай вуларăм. Салтаксемпе пĕрле Кремль стени çумĕнче Сталин виltăприйĕ çинче пулни те асран каймасть, – интереслĕ каласа парать 40 çул каялла пулса иртни пирки В. Шатунов. Хăй çавăнтах сăмахне çĕр-шыв пĕлтерĕшлĕ çынсемпе тĕл пулни, вĕсемпе алă парса калаçни, ют çĕр-шыв делегацийĕсене кĕтсе илни çине пăрса ярать. Ветеран асĕнче Г. Жуковпа, С. Буденăйпа, К. Ворошиловпа, Р. Малиновскийпе, Н. Хрущевпа тĕл пулнисем, А. Николаев космоса вĕçсе çĕр çине таврăннă хыççăн Мускав урамĕсемпе иртсе пынă чух халăх пырсах кĕресрен ăна хӳтĕлени т. ыт. те. Кашни тĕл пулу тарăн йĕр хăварнă хресчен çемйинчен тухнă чăваш салтакĕн асĕнче.

– Эпир çара кайнă чух салтак пурнăçĕнчен пăрăнса юласси пирки калаçу та, ĕмĕт те пулман. Салтак форми тăхăнасси чи пысăк чысчĕ пирĕншĕн. Çавăнпа та чаçе çитсен форма парсан ăна пĕрремĕш тăхăннă хыççăн куç кĕски умĕнчен чылай каяймарăм. Хам салтак пулнишĕн анне чунĕпе савăнтăм, – аса илчĕ сăн ӳкерчĕксем пăхса ларнă май ветеран салтак.

– Служба вăхăчĕ 3 çулталăк та 2 уйăх та 4 талăка тăсăлчĕ. Çак хушăра йĕркене пăсни, хушăва пурнăçламанни пулман. Çавăнпах-тăр служба вăхăтĕнче Кремль полкĕпе 7 хутчен Хĕрлĕ площадьри парадра утма тивĕç пултăм. Ку вара салтакшăн темĕнле чысран та мухтавлăрах, – парада кайма хатĕрленнĕ пек кĕлеткине тӳрлетсе каларĕ ветеран.

Киле Ятман каччи ефрейтор званипе таврăнать. Çийĕнчех тăван колхозра тракторпа ĕçлеме пуçлать. Мĕн чуль ана сухаланă, акнă, лартнă, кăларнă пулĕ хăй пурнăçĕнче Кремль полкĕнче действительнăй çар службинче тăнă механизатор.

1968 çулта çемье çавăрса мăшăрĕпе 2 ывăлпа пĕр хĕр çуратса ӳстерчĕç вĕсем. Кашнийĕнех паян хăйĕн çулйĕрĕ, ĕмĕчĕ, тĕллевĕ. Ашшĕн пурнăç çулĕпе кăмăллă вĕсем.

– 45 çула яхăн пĕрле пурăнатпăр та шăпам хамăра тĕл пултарнишĕн савăнатăп кăна. Ĕçрен нихăçан та айккинче тăман мăшăрăм ялти кашни çыннах хуçалăхри стройка ĕçĕсенче пулăшма тăрăшатчĕ. Тăван колхозра та ĕçрен юлмастчĕ. Ĕнер кăна пĕр автомашина вутă çурса тирпейлеме мехел çитерчĕ. Паян ачамсем те ашшĕн тăрăшулăхĕпе палăрни савăнтарать, – мăшăрне кăмăлласа каларĕ сумалли аппаратпа икĕ ĕне суса кĕнĕ мăшăрĕ. Хыççăнах Клавдия Афанасьевна упăшки 1981 çулта ăсталанă кăмакаран какай яшки кăларса сĕтел хушшине чĕнчĕ. 41 çул ĕç стажĕпе нумаях пулмасть Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ ята тивĕçнĕ асаннен яшки те тутлă иккен. «Паян пурнăç йывăр теççĕ. Вăл ĕçлемен çыншăн чăнласах йывăр пулнипе килĕшетĕп», – терĕ К. Шатунова яшкана чашăксене ярса.

**А. БЕЛОВ.**



Кашни ĕçрех пĕр чĕлхе тупма хăнăхнă Клавдияпа Вячеслав Шатуновсем çулĕсене кура мар çамрăк курăнаççĕ.

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Малалла пăхакан яш-кĕрĕм валли

## Ăрусен тăсăмĕ

Хĕл сиввисем тăраççĕ пулин те, чӳречерен пуш уйăхĕ шаккать. Çĕр ĕçченĕ черетлĕ çур акине хатĕрленнĕ вăхăтра шкулта вĕренекенсем те – вун пĕрмĕшсемпе тăххăрмĕшсем – пĕрлехи патшалăх экзаменĕ пирки пуç ватаççĕ. Муркашри вăтам шкулта та çак йĕрке паян тĕп вырăнта. Çак тăрăшулăх кунта ăруран ăрăва куçса пынăран вĕренекенсен ытларах пайĕ кунта шкул хыççăн аслă вĕренӳ заведенийĕсене бюджетлă вырăнсене вĕренме кĕни те шкулти вĕрентӳ ĕçĕ тĕрĕс çул çинчине çирĕплетет.

Шкул вĕрентӳ процесĕнчи çĕнĕлĕхсенчен нихăшĕнчен те айккинче юлмасть. Пурнăçпа тан пырса çĕнĕлĕхсен лавĕнчен ӳксе юлас мар тесе шкулти кадетсен корпусĕ те вĕренӳре тăтăшах ырăпа палăрать. Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре куракан **(сулахайран сылтăмалла)** Дмитрий Кирилловпа Сергей Коричев кадетсем 10 «б» класра вĕренеççĕ. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраканскерсем обществăлла ĕçсенчен те пăрăнса юлмаççĕ. Кĕскен каласан пур ĕçре те вĕсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

– Кадет çулне суйласа илтĕмĕр пулсан алă усса ларма юрамасть. Пирĕн вĕренӳ тата шкулти ĕç-хĕл аттесемпе асаттесен çарти тата вăрçăри паттăрлăхĕн тăсăмĕ пулнине ăнланатпăр. Кадетсен корпусĕнчи 26 кадетран кашниех хăй валли çирĕплетнĕ çи-пуçа чыслăн тăхăнса çӳрет, – терĕç кĕске калаçура тантăшсем.



Нумаях пулмасть кадетсен пĕр ушкăнĕ нравственноçпа право тата патриотизм воспитанийĕ илес тĕллевпе Шупашкара кайса Раççейри наркотиксемпе кĕрешекен федераллă службăн Чăваш Республикинчи управленийĕнче пулса унти ĕçсемпе паллашрĕ. Управленипе налук полицийĕ уçнă музейра пулни, шкул ачисем Муркашри 37-мĕш пушар чаçĕпе туслă çыхăну тытни – кадетсемшĕн кăсăклă самантсем.

Муркаш шкулĕнче çĕр-шывăн пулас сыхлавçисем ăс пухнине кунта вĕренекенсем пĕтĕм Раççейри «Эпĕ – тĕпчевçĕ» наукăпа практика конференцине активлă хутшăнни те çирĕплетет. Л. Тихонова вĕрентекен ертсе пынипе унта хутшăннă кĕçĕн классенчи 12 ĕçрен 10-шĕ призерсен ретне лекни – ырă тĕслĕх. Çак конкурса аслă классенче вĕренекенсем те активлă хутшăнчĕç.

Шкулта вĕренекенсем çĕр-шывăн чăн-чăн сыхлавçисем пулма хатĕрленни пирки иккĕленӳ çук.

**А. ПЕТРОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Салтак пурнăçĕнчен



# «Хам батальона ăсатрăм»

– Афганистанра çур çул службăра тăнă хыççăн пĕррехинче пĕр çапăçура 150 салтакран тăракан ротăран çурри çапăçу хирне выртса юлни (73 салтак вилнĕччĕ тата иккĕн аманнăччĕ) паян та асран тухмасть. Пурте çамрăк, пурăнмалла та пурăнмалла, анчах... «Хура тюльпансем» Тăван çĕр-шывалла вĕçнине пăхма-сăнама питĕ хурлăхлăччĕ. Ара, тантăшсем вĕт, ĕнер пĕрле чей ĕçнĕ. Чылайăшĕ хĕр тути те курман, – терĕ «Афган вăрçин ветеранĕ» орден илнĕ хыççăн куççульне пытарса Николай Перов кĕçĕн сержант **(сăн ӳкерчĕкре)**.

Коля çак батальона çитиччен унта 1982 – 1984 çулсенче унăн ентешĕ Владислав Яндимиркин службăра тăнă. Çартан таврăнсан ентешне салтака ăсатнă чух каччă хăйĕн вырăнне лекессе шутланă-и вăл? Çук пулĕ, анчах... Маларах асăннă çапăçура пуç хунисем хушшинче унăн пĕлĕшĕсем те пулнах ĕнтĕ...

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Пирĕн енчи чăн-чăн хӳтĕлевçĕсем

**Ыран – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ**

***1941–1945 çулсенче Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи 13 ялтан 746 çын хутшăннă. Вĕсенчен 438-шĕ çапăçу хирĕнче пуç хунă, 308-шĕ каялла таврăннă.***

Паянхи куна вара пирĕн ял тăрăхĕнче 5 ветеран кăна пурăнать.

Актай ялĕнчи **Николай Александрович Александров** халĕ Муркашра пурăнать – патшалăх ăна хватерпе тивĕçтернĕ. Вăл 90 çултан иртнĕ.

**Николай Лукич Яковлев** Актайра 1925 çулта çуралнă. Хурăнкасси ялĕнче ÿснĕ. Панкли тăрăхĕнче музей та йĕркелеме пултарчĕ. Нумай ветеран çинчен хатĕрленĕ материалсене хаçатсенче пичетлесе кăларчĕ. Кăранташпа ÿкернĕ картинисем музейра упранаççĕ. Николай Лукич – 9 кĕнеке авторĕ. Шупашкарта пурăнать пулсан та ялпа çыхăну татмасть.

**Варсонофий Андреевич Андреев** 1924 çулта Тури Панкли ялĕнче çуралнă. Панклири тулли мар вăтам шкул пĕтерсенех ăна 1942 çулта вăрçа илсе каяççĕ. Унта вăл полк шкулĕнчен вĕренсе тухать, отделени командирĕ пулса тăрать.

– Эсĕ, Андреев, ялта ÿснĕ. Лашапа ĕçленĕ. Халĕ санăн 45 миллиметрлă тупăна лашасемпе турттармалла, – хушу парать командир.

– Лашасемпе тупăна вăрмана хӳтлĕхе кĕртсе тăратрăмăр кăна, тăшман снарячĕ пырса ÿкрĕ. Пирĕн лашасем те, тупă та арканчĕ. Эпĕ вилĕмрен çăлăнса юлтăм – амантăм кăна, – каласа парать ветеран.

Çапăçури тепĕр саманта та паянхи пекех ас тăвать вăл. Пулеметран перекен юнашар каччăна вилмеллех амантаççĕ. Ун вырăнне шăпах Варсонофий йышăнать, фашистсене пулеметран çунтарма тытăнать. Нумай нимĕçе «леш тĕнчене» ăсатать. Украинăра Каменец-Подольск хули патне çывхараççĕ.

– Пирĕн çине тăшман мини килсе ÿкрĕ. Ванчăкĕсем сылтăм хул пуççие аркатрĕç, пĕри ÿпкенех кĕрсе вырнаçрĕ. Халĕ те ăна çавăнтах йăтса çÿретĕп, – тет Варсонофий Андреевич.

Чылай çул иртсен, 1954 çулта, Муркаш районĕн çар комиссарĕ Варсонофие хăй патне чĕнет, ун ячĕпе награда килни çинчен пĕлтерет. Кăкăрĕ çине 3 степень Мухтав орденĕ çакса ярать.

1947 çулта салтакран таврăнать ентеш. Тĕрлĕ çĕрте ĕçлет. Агитатор ĕçне те сахал мар туса пынă. Çурлапа тырă вырнă вăхăтра уя час-часах хаçат-журналта, кĕнекесенче çырнипе паллаштарма ситетчĕ. Вăл председателĕн пулăшаканĕнче те, ферма заведующийĕнче те нумай вăхăт ĕçлерĕ. Никама та сивĕ сăмах каламан.

Çыннăн пурнăçра саванăçĕ те, хуйхи те пулать. Иртнĕ çулсенче унăн икĕ ывăлĕ вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Мăшăрĕ çут тĕнчерен уйрăлни те 30 çула майлах. Халĕ ветерана кинĕ пăхса пурăнать. Варсонофий Андреевич хăй те вак-тĕвек ĕçсем тăвать. Туяпа çÿрет пулин те.

**Павел Кузьмич Кузьмин** 1924 çулта Тури Панкли ялĕнче çуралнă. 1942 çулта август уйăхĕнче фронта тухса кайнă. Костромари çар лагерĕнче икĕ уйăх майлă артиллери çар хатĕрĕ шутне кĕрекен 82 миллиметрлă миномет вăрттăнлăхĕсене вĕренсе кĕçĕн сержант звани илет. Полк шкулне пĕтерет. Павел Кузьмича 9 салтакран тăракан минометчиксен отделенине шанса параççĕ.

Нимĕçсем Украинăра лайăх çирĕпленсе ларнă пулнă.

– Окопсем чавса вырнаçрăмăр кăна, малалла кайма хушу пулчĕ. Эпир нимĕçсене хăвалама пуçларăмăр. Çапăçура тăшман пульли амантрĕ. Тĕттĕмлениччен юн юхтарса выртнă. Кайран санитарсем тупса санитари пунктне илсе кайнă. Пĕтĕмĕшле наркоз парса операци турĕç. Çамрăк пулнăран икĕ уйăхран сывалтăм. Мана урăх чаçе янă.

Ун хыççăн икĕ хутчен çапăçусенчен йĕркеллех тухнă Павел Кузьмич. Виççĕмĕш хутĕнче фашист пульли сылтăм чавса сыпăкне аркатса кайнă. Каллех операци тумалла пулать. Нумай вăхăт госпитальте выртма тивет. Иккĕмĕш ушкăн инвалидне 1944 çулхи май уйăхĕнче киле яраççĕ.

Малтанхи çулсенчех ĕçлеймен вăл. Кайран вара пур çĕрте те тăрăшнă. Тимĕрçĕре те 14 çул вăй хунă.

Хальхи вăхăтра Павел Кузьмич ывăлĕпе пурăнать. Хĕрĕсем те килсе пулăшса тăраççĕ. Мăшăрĕ 10 çул каялла çĕре кĕнĕ.

Мана вăл хăйĕн çири кĕпине хывсах суран вырăнĕсене кăтартрĕ. Гипспа тĕрĕс вырнаçман хулĕ халĕ те ыратнине калать.

**Григорий Константинович Константинов** та Тури Панклире 1919 çулта февраль уйăхĕнче çуралнă. 1939 çулта кĕркунне ăна çара илеççĕ. Мускав патĕнчи авиаци чаçĕнче службăра тăрать вăл.

Хаяр вăрçă пуçлансан, фашист самолечĕсем Мускав çине вĕççе килме тытăнсан вăл тĕп хулана хӳтĕленĕ çĕре хутшăнать.

Пĕрремĕш Украина фронтĕнчи стрелоксен полкĕн пехотинецĕ Украинăна нимĕçсенчен ирĕке кăларнă чухне çапăçусене пĕрре мар кĕрет. 1943 çулта йывăр аманать. Пит шăммин сылтăм енне снаряд ванчăкĕ аркатса каять. Госпитальте виçĕ уйăх сипленет Григорий Константинович. Хыççăн нимĕçсенчен ирĕке кăларма чылай çĕр-шыва çитет. Вăрçа Австри çĕрĕ çинче «вĕçлет».

Вăл нумай наградăна тивĕçнĕ. Вĕсем хушшинче 1 степень Аслă Отечественнăй вăрçă, 2 степень Мухтав орденĕсем те пур.

1946 çулта Григорий Константинович яла таврăнать. Колхозра мĕн хушнă ĕçе пурне те пурнăçлать: лаша та пăхать, сухалать-сÿрелет.

Шăпи ăна иккĕ авланма пÿрнĕ. Малтанхи арăмĕнчен пĕр хĕр ача пулнă. Вăл юнашар яла Михаил Петрова качча тухнă. Лайăх пăхаççĕ ăна хĕрĕ патĕнче. Пĕрремĕш арăмĕ те, иккĕмĕшĕ те вилнĕ ĕнтĕ.

Чăн-чăн çĕр-шыв хӳтĕлевçисем вĕсем – пирĕн енчи ветерансем. Патшалăх вĕсене манманшăн савăнаççĕ вĕсем паян. Панкли участокĕнчи тухтăра Светлана Башкировăна вара вĕсен сывлăхне тĕрĕслесе тăнăшăн чĕререн тав тăваççĕ.

**Н. ЯКОВЛЕВ, И. ЯКОВЛЕВ.**

**Йыхрав**

## Муркашри ринг хăнасене йышăнать

Совет çарĕсене Афганистанран кăларнине асăнса, интернационалист-салтаксене халалласа Муркаш район администрацийĕн кубокне çĕнсе илессишĕн Муркашра çитес эрнере пысăк ăмăрту иртет. Республика шайĕнчи бокс ăмăртăвне февралĕн 28-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче савăнăçлă лару-тăрура 15 сехетре уçма палăртнă. Муркаша çĕр-шывĕлех паллă та сумлă спортсменсем килессе пĕлтернĕ.

Ăмăрту уçă шайра иртнĕрен унта республикăри боксерсем кăна мар, Чулхула облаçĕнчи, Ульяновск, Санкт-Петербург хулисенчи, Мари тата Мордови республикисенчи боксерсем те хутшăнаççĕ. 2003 çулта çуралнă тата аслăраххисем пурĕ 7 тĕрлĕ ушкăнра 24 виçе категорийĕнче кĕрешĕç. Кунсăр пуçне ринг çине пĕрремĕш хут хĕр ачасем те тухаççĕ.

Муркаш ен боксерĕсем – районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК воспитанникĕсем турнирта ăнăçлă ăмăртасса шанатпăр.

**Бокс енĕпе çакăн пек пысăк ăмăрту Муркашра пĕрремĕш хут иртет: февралĕн 28-мĕшĕнче пуçланнă турнир мартăн 2-мĕшĕнче финал кĕрешĕвĕсемпе тата çĕнтерӳçĕсене чысланипе вĕçленет. Пурте çитсе курма тăрăшăр.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Спорта юратакансем ăнăçуллă



***Районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен тата Чуманкасси ял тăрăхĕнчи ĕçлекенсен командисем иртнĕ шăмат кун Чуманкасси шкулĕнчи спортзала пухăнчĕç. Район шайĕнче тепĕр çĕнĕ ăмăрту хутшăнчĕ – «Спрут–Сервис» обществăн кусса çÿрекен кубокĕсемшĕн волейболла выляссси.***

«Çак ăмăртăва малашне кашни çулах иртерме шутлатпăр. Паян тăхăр команда хутшăнчĕ пулсан çитес ăмăртусенче командăсен шучĕ татах та ытларах пуласса шанас килет. Кирек ăçта пулсан та, кирек ăçта вĕренсен те, ĕçлесен те спорт пирки нихăçан та ан манăр. Хăвăр спортпа туслă пулсан юлташсене явăçтарма тăрăшăр. Сирĕн çитĕнӳсене курса ыттисем хавхаланса тăччăр. Сирĕн пек хастар пулма, сирĕнтен те лайăхрах пулма тăрăшчăр», – Шупашкарти «Спрут–Сервис» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Петр Марцинковский ăмăртăва вĕçлесе каланă çак сăмахсене çамрăк спортсменсем ăса хывреç пулĕ.

Шкул ачисен ултă команди икĕ ушкăнра выляре: пĕр ушкăнĕ – Тойкилтĕри тĕп шкулăн спортзалĕнче, тепри – «килте». Район шайĕпе пăхас пулсан командăсен шучĕ нумаях та мар темелле, анчах та ачасем хавхаланулла кăмăлпа, хĕрсе кайса выляни хаклă. Петр Казимирович калашле, чи пĕлтерĕшли – вылякансен куçĕ ялкăшни.



Мала тухассишĕн кашни вăйăрах кĕрешӳ çивĕч пулчĕ. Аппа пулин те ку ăмăртура Москакассинчи вăтам шкулта вĕренекенсене çитекенни пулмарĕ. Иккĕмĕш вырăна Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсен команди тухрĕ, виççĕмĕшне – Нискассисем. Çак командăсенче вылякансем пĕр-пĕрне туйса, мечĕке туйса выляни сисĕнчĕ. Чуманкассинчи, Ярапайкассинчи тата Шетмĕпуçĕнчи вĕренекенсем медальсемпе дипломсене тивĕçеймерĕç пулин те ăмăрту йĕркелӳçинчен уйрăм тав сăмахне тивĕçрĕç. Вĕсем хутшăнмасан ăмăрту интереслĕ пулмĕччĕ паллах.

Ĕçлекенсен командисем, шел пулин те, виççĕ кăна пулчĕç. Ку нимĕнпе те чăрмантармарĕ – выляс тесех вылярĕç вĕсем. Вăйăсем вăхăтĕнче вара «пирĕн те командăпа тухмалла пулнă» тенине курма пынисенчен пĕрре мар илтме тӳр килчĕ. Аппла çитес çул аслисем те ытларах пуласса шанас килет. Пĕрремĕш ăмăртура вара вырăнти шкулăн команди çĕнтерчĕ, иккĕмĕш вырăнта – Чуманкасси ялĕн команди, виçĕмĕшĕнче – «Спрут-Сервис» команди. Йĕркелӳçĕ хăйĕн çине укса-тенкĕ, парне ыйтăвне илсе хăйĕн ответлăхне палăртрĕ пулсан, ĕçлекенсен спорт командипе килсе вара спорта юратакансем пур çĕрте те ăнăçуллă пулнине çирĕплетрĕ.

Вăйăсенче палăрнă сакăр уйрăм вылякана тĕрлĕ номинацире хакласа ятарлă кубоксемпе дипломсем парса чысларĕç. Çĕнтерӳçĕ командăсем кусса çÿрекен пысăк кубоксене тивĕçрĕç.



**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Мĕн тери вăй кирлĕ!

Февраль уйăхĕнче пирĕн шкулта йăлана кĕнĕ тăрăх кире пуканĕ çĕклессипе ăмăрту иртет. Ăна йывăр атлетикăн спорт мăстăрне Юрий Ковалева асăнса, Михаил Музыков парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерессĕ. Çак кĕрешĕве пуçарса яраканĕ Юрий Ильич хăй пулнăччĕ. Питĕ шел, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.

Йĕркелӳ ĕçне вара кашни çулах Юрăн пиччĕшĕ Алексей Ковалев хăй çине илет. Иван Воробьев тата Михаил Музыков та яланах пулăшаççĕ. Сăмах май каласан вĕсем ачаранпах спортпа туслă пулнă. Ял тăрăхĕнче те вĕсене ырăпа çеç пĕлеççĕ.

Ăмăрту кунĕнче шкула сумлă хăнасем чылайăн пухăнчĕç. Ăмăртăва таçтан та килчĕç, кÿршĕ районтан та пулчĕç.

Ăмăртăва хĕр ачасем те хутшăнма кăмăл турĕç. Пĕрремĕш вырăна акă Москакасси шкулĕнчи Анна Петрова йышăнма пултарчĕ. Арçын ачасенчен тĕрлĕ ÿсĕмсенче Атапай шкулĕнчи Алексей Вязов, Етĕрне районĕнчи Иван Ионов, Максим Николаев, Иван Молодаев, Анатолий Федоров çĕнтерчĕç.

Мĕн тери вăй кирлĕ кире пуканĕ çĕклеме! Яшсемпе хĕрсем чăннипех тĕлĕнтерчĕç, малалла та çапла вăйлă та çирĕп пулăр!

Уява «Хыпар» хаçат корреспонденчĕ Петр Сидоров та килсе çитрĕ. Мала тухнисене вăл хăйĕн çĕнĕ кĕнекине парнелерĕ.

**С. ВЯЗОВА,**
**Атапай шкулĕнче пуçламăш классене вĕрентекен.**

# Кĕрешӳре туслăх çĕнтерет

***Çак кунсенче Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕ оборонăллă-массăллă ĕçсен уйăхне хутшăнса тата Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа Йӳçкасси шкулĕнче ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусем йĕркелерĕ.***

Ăмăртусене уçнă май салам сăмахĕсемпе çамрăксен канашĕн председателĕ А. Димитриева, Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Кузьмин, «Ударник» хуçалăх ертӳçи В. Федоров, Йӳçкасси шкулĕн директорĕ Ю. Яковлев тухса каларĕç.

Спорт турнирĕ илĕртӳллĕ те çÿллĕ шайра иртрĕ. Уйрăмах волейбол ăмăртăвне палăртмалла. Малти вырăнсене кунта «Никита», Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕн тата Йӳçкасси шкулĕн командисем пайларĕç. Сĕтел çи теннисĕнĕпе Н. Алексеев («Сорма»), А. Ермолаев (Йӳçкасси), Е. Егоров (Вăрманкасси) палăрчĕç. Пăшалтан тĕл пересси пе вара Г. Григорьев (Вăрманкасси), А. Владимиров (Йӳçкасси), А. Андреев («Сорма») мала тухма пултарчĕç.

Командăсен пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсем тăрăх Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕн команди мала тухни паллă пулчĕ, кусса çÿрекен кубока та вăл тивĕçрĕ. «Сорма» тата Вăрманкассисен командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Хĕрсен командисен тупăшăвĕ те хĕрӳ иртрĕ. Кунта Йӳçкасси шкулĕнчи хĕрсене çитекенни пулмарĕ.

Мала тухнисемпе призерсем ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕн грамотисене, дипломсемпе медальсене тата укçан парнесене тивĕçрĕç.

Ăмăртусене хатĕрленсе ирттерме пулăшнăшăн Йӳçкасси шкулĕн коллективне, турнирăн тĕп судйине П. Васильева, çавăн пекех хамăр спонсорсене – Г. Григорьева, В. Яковлева, А. Егорова, В. Димитриева, Г. Димитриева пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**А. ДИМИТРИЕВА,**
**Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕн председателĕ.**

# Телепрограмма

## с 25 февраля по 3 марта 2013 года

### ПОНЕДЕЛЬНИК, 25.02

#### ПЕРВЫЙ

5.00 «Доброе утро» Церемония вручения наград американской киноакадемии «Оскар-2013»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить 12+
15.20 «Хочу знать»
15.50 «Ты не один» 16+
16.20 «Дешево и сердито»
17.00 Т/с «НЕРАВНЫЙ БРАК» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЕСЕНИН» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 Церемония вручения наград американской киноакадемии «Оскар-2013»
1.45, 3.05 Х/ф «БОЕЦ» 16+
4.00 Т/с «СЛЕДСТВИЕ ПО ТЕЛУ» 16+

#### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
13.50, 16.45, 4.45 Вести. Дежурная часть
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
17.50 Т/с «КАТЕРИНА. ВОЗВРАЩЕНИЕ ЛЮБВИ» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 Т/с «ПРИНЦИП ХАБАРОВА» 12+
1.15 «Девчата» 16+
1.55 Х/ф «АРН: КОРОЛЕВСТВО В КОНЦЕ ПУТИ» 16+

#### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
